Тропари

на чувашском

языке.

БИБЛИОТЕКА
ПРИХОДА ПРАВОСЛАВНОЙ
ЦЕРКВИ СВЯТЫХ
"НОВОМУЧЕНИКОВ И
ИСПОВЕДНИКОВ РОССИЙСКИХ"
г. Чебоксары, пр. Тракторостроителей, д. 4
Инв. № 9048 серия
Чув. книга.

Т 74

БИБЛИОТЕКА
храма "Новомучеников и
Исповедников Российских"
г. Чебоксары
инв.№ 9048

çĕмĕрнĕ. Хăй пурне те тытса тăракан Турă тăрăх виççĕмĕш кунне ђĕрĕлсе тăнă.

5 к ĕ в в ĕ н. *Троиарь.* Ашшĕпе, Сывлăшĕпе пĕрех ĕмĕртен малтанхи Сăмах Турă пире çăласшăн Хĕртен çуралнă: Хăй ирĕкĕпе хĕрес çумне ӳђĕпе пăталанса вилĕме парăннă; хăватлăн ђĕрĕлсе тăрса вилнисене ђĕртнĕ; ... ĕненекенсем, Ăна мухтаса йууласа пуђос çапар.

*Богородичен.* Ей никам çӳрейми Турă алăкĕ, савăн! Ху патна пыракансене хӳтĕлесе витсе тăракан хӳме, савăн! çил-тăвăл тивмен вырăн, савăн! Есĕ Хăна пултарнă Турра арçынна пĕлмесĕр ӳтлĕ çуратнă. Хăнтан çуралнă Турра мухтаса йурлакансемпĕн, Ăна пуççапакансемшĕн кĕл-тума ан ђарăнсам.

*Кондак.* Ей етеме савакан, мана çăлакан Турă, Есĕ тамăка аннă; хăватупа тамăкăн хапхине çĕмĕрнĕ, Ху пурне те пултарнă Турă тăрăх вил-

нисене Хупала пĕрле ђĕртсе тăратнă, вилĕм сăннине хуçнă, Адама ылханран хăтарнă; çавăнпа Сана пурсăмăр та, ей Турă, çăл пире, тесе йăлăнатпăр.

6 к ĕ в в ĕ н. *Тропарь.* Ей Христос Турă, Санăн тупăку çинђе ангелсем тăнă, хурал тăракансем хăраса ăнсăр пулнă; Марія Санăн таса ўтне шыраса тупăк шăтăкне кĕнĕ: Есĕ Ху пĕр сийенленмесĕр тамăка тыткăна илнĕ, ђĕрĕлĕх парса тухса, таса Хĕре хирĕç пулнă; ей вилĕмрен ђĕрĕлсе тăнă Турă, мухтав Сана.

*Богородичен.* Ей Христос Турă, Есĕ мухтавлă Хĕре Хăвăн анну туса Ху ирĕкўпе асапланма килнĕ, Адама тупасшăн хĕрес çумĕнђе çутăлса тăнă ђух ангелсене каланă: Манпала пĕрле савăнăр, çухалнă драхма тупăнђĕ, тенĕ. Ей пурне те хăватлă ăсупа пĕлсе тунă Туррăмăр, мухтав Сана.



*Кондак.* Пурăнăç паракан, пуринĕн те Турри Христос, ђĕрĕлĕх паракан аллипе вилнисене тĕттĕм çĕртен Хăйпе пĕрле ђĕртсе кăларнă, пĕтĕм етем йăхне ђĕрĕлĕх панă. Вăл пурне те çăлакан, пурне те ђĕртекен, пурне те пўрăнăç паракан, пуринĕн те Турри.

7 к ĕ в в ĕ н. *Тропарь.* Ей Христос Турă, Есĕ хĕресўпе вилĕме пĕтертнĕ, вăрă-хурах валли рай алăкне уçнă, муро илсе йĕрсе пыракан хĕр-арăмсене савăнтарнă, Ху ђĕрĕлсе тăрса пĕтĕм тĕнђене пысăк ырăлăх пани çинђен апостолсене тĕнђери халăхсене вĕрентме хушнă.

*Богородичен.* Ей пур те мухтаса йурлакан Турă Амăшĕ, ђĕрĕлĕх епир Сан тăрăх илетпĕр, Ху çине шанса тăракансене тарăн çылăх тĕпĕнђен кăлар. Пире Çăлакана çуратса Есĕ çылăха кĕнисене çăлнă. Есĕ Ăна çу-

ратиҫҫен те, ҫуратнӑ ҫух та, ҫуратсан та йаланах хӗр халлӗн тӑратӑн.

*Кондак.* Тамӑк хӑваҫӗ малашне етемсене тытса тӑма пултарас ҫук: тамӑка Христос анса ун хӑватне ҫӗмӗрсе пӗтернӗ, тамӑка хӑйне ҫыхса хунӑ. Пророксем пӗрле савӑнса тӑрса йурланӑ: ҫӑн тӗнпе пурӑнакансем патне Ҫӑлакан килҫӗ; ей ӗненекенсем, ҫӗрӗлсе тухӑрӗнтӗ, тенӗ.

8 к ӗ в в ӗ н. *Тропарь,* Ей ырӑ кӑмӑллӑ Турӑ, Есӗ пире асапран ҫӑласшӑн ҫӳлтен аннӑ, вилсе виҫ кун ҫӗр айӗнҫе выртнӑ; пире пурӑнӑҫ паракан, пире ҫӗрӗлӗх паракан Турӑ, мухтав Сана.

*Богородичен.* Ей ырӑ Турӑ, Есӗ пирӗншӗн Хӗртен ҫуралнӑ, хӗрес ҫумне пӑталанине тӳснӗ, вилӗмӳпе вилӗме пӗтернӗ, Ху Турӑ тӑрӑх етемсем ҫӗрӗлсе тарассине кӑтартнӑ; Ху аллу пултарнисене ан пӑрах, етеме савакан ырӑ кӑмӑлна кӑтарт. Ей хӗрхенекен Ту-



рӑ, пирӗншӗн кӗл-тӑвакан Турӑ Амӑшне хапӑл ил; ей Ҫӑлакан, пӗтес патне ҫитнӗскерсене ҫӑл пире.

*Кондак.* Ей нумай ырӑлӑхлӑ Турӑ, Есӗ тупӑкран ҫӗрӗлсе тухнӑ, вилнисене ҫӗртсе тӑратнӑ, Адама ҫӗртнӗ, Ева та Сан урлӑ ҫӗрӗлсе тӑпӑшӑн савӑнаҭ. Есӗ ҫӗрӗлсе тӑнӑшӑн пӗтӗм тӗнҫе вӗҫӗ-хӗррипех хӗпӗртесе савӑнса тӑраҭ.

## V.

## ВУНИКӖ АСЛӐ ПРАҪНИКСЕНӖН ТРОПАРӖСЕМПЕ КОНДАКӖСЕМ.

*Пире пӑхса усракан, Турра ҫуратнӑ ҫӑн таса ӗмӗр - Хӗр Марія ҫурални. Авӑн уйӑхин (сентябрӗн) 8 йунӗнҫе.*

*Тропарь 4-мӗш йӗвӗпе.* Ей Турра ҫуратнӑ Хӗр, Есӗ ҫурални пӗтӗм тӗнҫене савӑнӑҫ кӳнӗ: Санран ҫӑнлӑх Хӗвелӗ Христос Туррӑмӑр ҫутӑлса тухнӑ; Вӑл авалхи ылхана пӑрахӑҫ

туса, пире пиллĕх панӑ; вилĕме пĕтерсе, пире ĕмĕрлĕхе ђĕрĕлĕх панӑ.

*Кондак, 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей таса Хĕр, Есĕ таса çуралнипе Іоакимпа Анна ађа-пăђа çук хурлӑхран хӑтӑлнӑ, Адампа Ева вилсе çухаласран çăлӑннӑ; Хӑвӑн етеммӳсем çылӑх айăпĕнђен хӑтӑлнӑшӑн Сана мухтаса йурлаççĕ: ађа-пăђа çуратманни Турра çуратакана, пирĕн ђуна тӑрантаракана çуратнӑ, теççĕ.

*Пире пӑхса усракан, Турра çурртнӑ ђӑн таса ĕмĕр-Хĕр Маріяна ђиркĕве кӳртни. Ђӳк уйăхин (ноябрĕн) 21 кунĕнђе.*

*Тропарь, 4-мĕш кĕвĕпе.* Пайанхи кун Турӑ Хӑй тӑвас ырӑлӑхне малтан кӑтартса хунӑ, етемсем çăлӑнассине пĕлтернĕ, пайанхи кун Турӑ çуртне Хĕр кĕнĕ, вӑл Христос килессине пĕлтернĕ; епир те Ăна савӑнса калар: ей таса Хĕр, савӑн! етеме çăлас ĕçне Турӑ Сан тӑрӑх тунӑ, тийер.



*Кондак. 4-мĕш кĕвĕпе.* Çăлаканӑн таса ђиркĕвĕ, пит паха çурђĕ, Туррӑн мухтавлӑ таса вырӑнĕ пулас Хĕр пайанхи кун Турӑ çуртне кĕнĕ, хӑйпе пĕрле Турӑ Сывлӑшин хӑватне кӳртнĕ. Вӑл Хĕре Турӑ ангелĕсем мухтаса йурланӑ: ку Хĕр Туррӑн çӳлти вырӑнĕ, тенĕ.

*Пире пӑхса усракан, Турра çуратнӑ ђӑн таса Хĕр Маріяна ырӑ хыпар калани. Пушӑ уйăхин (мартӑн) 25 кунĕнђе.*

*Тропарь, 4-мĕш кĕвĕпе.* Епир çăлӑнасси пайанхи кун пуçланнӑ, Турӑ авал каланӑ пĕлми ĕç уçӑлнӑ: Турӑ Ывӑлĕ Хĕр Ывӑлĕ пулнӑ, Гавріил Архангел ырӑ хыпар каланӑ. Унпала пĕрле Турӑ Амӑшне епир те: ей тивлетлĕ Хĕр, савӑн! Санпала Турӑ, тесе йурлар.

*Кондак 8-мĕш кĕвĕпе.* Ей Турӑ Амӑшĕ, Есĕ хӑватлӑ çар пуçлӑхĕ пек тӑшмансене çĕнтеретĕн, епир ђуру

сем тăшмансенђен хăтăлнăшăн Сана тав-туса мухтаса йурлатпăр; Хăвăн пурне те çентерекен хăватлă вăйупа пур инкекрен те хăтар пире, епир Сана: ей таса Хĕр, савăн! тесе калар.

*Пире Çăлакан Іисус Христос Туррăмăр çурални. Раштав уйăхин (декабрĕн) 25 кунĕнђе.*

*Тропарь, 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей Христос Туррăмăр, Есĕ çуралсан тĕнђене ăс паракан çутă тухнă: çăлтăрсене пуççапса пурăнакансем çăлтăртан Сана ђăнлăх Хĕвелне пуççапма вĕреннĕ, Есĕ çӳлти Хĕвел тухăçĕ иккенне пĕлнĕ; ей Турă, мухтав Сана.

*Кондак, 3-мĕш кĕвĕпе.* Пайанхи кун таса Хĕр ĕмĕрхи Турра çуратнă, патне пымалла мар Турă валли çĕр выђăх вити хатĕрленĕ, ангелсемпе кĕтӳçĕсем Ăна мухтаса йурланă, çăлтăрçăсем çăлтăр хыççăн пынă; ĕм-



ĕртен малтанхи Турă пиреншĕн ађа пулса çуралнă.

*Іисус Христос Туррăмăра хирĕç тухса илни. Нарс уйăхин (февралĕн) 2 кунĕнђе.*

*Тропарь, 1-мĕш кĕвĕпе.* Ей Турра çуратнă тивлетлĕ Хĕр, савăн, Сан ăшăнтан ђăнлăх Хĕвелĕ Христос Туррăмăр çутăлса тухнă, тĕттĕмре пурăнакансене çутăлтарнă; есĕ те таса пурăнăçлă ватă Симеон, савăн: ђунăмăрсене Çăлакана, пире ђĕрĕлĕх Паракана есĕ ху аллу çине илнĕ.

*Кондак, 1-мĕш кĕвĕпе.* Ей Христос Турă, Есĕ Хĕртен çуралса Хĕр ăшне тасатнă, малтан пĕлтернĕ пек, тивĕçлипе Симеон аллисене пилленĕ, пайанхи кун пире çăлнă: патшалăхна вăрçăран хăтарса канăçлă ту, Ху йуратнă АСЛĂ ПАТШАМĂРА хăват пар: пĕр Есĕ анђах етеме савакан Турă.

*Іисус Христос Туррă̆мă̆р шыва кĕни. Кă̆рлатџă̆н (январĕн) 6 кунĕнтџе.*

*Тропарь, 1-мĕш кĕвĕпе.* Ей Турă̆, Есĕ Іордан шывĕнтџе шыва кĕнĕ тџух, епир пуççапакан Виç-ипостаçлĕ Турă̆ курă̆ннă̆: Атте Турă̆ Хă̆й сассипе Сана савнă̆ Ывă̆лă̆м, тесе Сан çинтџен пĕлтернĕ, Святой Сывлă̆ш кă̆вакарџă̆н пек пулса анса вă̆л сă̆маха тата ытларах ĕнентернĕ. Ей çĕр çине килекен, тĕнтџене çутă̆лтаракан Христос Турă̆, мухтав Сана.

*Кондак, 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей Турă̆, Есĕ пайанхи кун пĕтĕм тĕнтџе халă̆хне курă̆ннă̆, Сан çутту пирĕн çийе ӳкнĕ. Епир Сана пĕлсе йурлатпă̆р: Есĕ пă̆хма çук хă̆ватлă̆ Çутă̆, пирĕн пата килнĕ, пире курă̆ннă̆, тетпĕр.

*Іисус Христос Туррă̆мă̆р çап-çутă̆ пулни. Çурла уйă̆хин (августă̆н) 6 кунĕ*

*Тропарь, 7-мĕш кĕвĕпе.* Ей Христос Турă̆, Есĕ ту çинтџе çап-çутă̆ çутă̆лнă̆,



вĕренекекенӳсене курма халĕсем çитнĕ таран Ху аслă̆лă̆хна кă̆тартнă̆; пире те çылă̆хлă̆ çапсене, Турă̆ Амă̆шĕ кĕллипе, Санă̆н ĕмĕрех пур çутту çутатинтџĕ. Ей çутă̆ паракан Турă̆, мухтав Сана

*Кондак, 7 мĕш кĕвĕпе.* Ей Христос Турă̆, Есĕ ту çинтџе çап-çутă̆ çутă̆лнă̆, вĕренекенӳсем курма халĕсем çитнĕ таран Санă̆н аслă̆лă̆хна курнă̆; Сана Хĕрес çумне пă̆таланине курсан, вĕсем, Есĕ Ху ирĕкӳпе асап курнине пĕлмелле пулнă̆, Есĕ Атте Туррă̆н тџă̆н Çутти иккене тĕнтџе халă̆хне вĕрентсе çӳремелле пулнă̆.

*Турă̆ Іерусалиме кĕни мун-кун ерне тенĕ тџухне.*

*Тропарь, 1-мĕш кĕвĕпе.* Ей Христос Турă̆, Есĕ пур те тџĕрĕлсе тă̆рассине ĕнентерсе Ху асапланас умĕн вилнĕ Лазаре тџĕртнĕ. Çавă̆нпа епир те атџасем пек, хă̆ват йалавне тытса тă̆рса,

Сана вилӗме Ҫӗнтерекене калатпӑр: ей ҫӳлти Осанна, Турӑ йађӗпе Килекен мухтавлӑ, тетпӗр.

*Кондак, 6-мӗш кӗвӗпе.* Ей Христос Турӑ, ҫӳлте Сана Хӑвӑн аслӑ вырӑну ҫинђе йӑтса ҫӳреҫҫӗ, ҫӗр ҫинђе ашак ҫинче утлантарса пыраҫҫӗ; Есӗ Хӑтыхи ҫине утлантарса пыраҫҫӗ; Есӗ Хӑна ангелсем мухтанине те, ађасем: ей Адама ђӗнме Килекен, Есӗ мухтавлӑ, тесе йурланине те хапӑл илнӗ.

*Іисус Христос Туррӑмӑр пӗлӗт ҫине ҫӗкленни Мункун иртсеп 40-мӗш кунта кулаӑт.*

*Тропарь, 4-мӗш кӗвӗпе.* Ей Христос Туррӑмӑр, Есӗ аслӑлӑхна кӑтартса ҫӳле ҫӗкленнӗ, Святой Сывлӑша анҫӳле ҫӗкленнӗ, Святой Сывлӑша ансавӑнтарма пулса вӗренекенӳсене савӑнтарнӑ, вӗсене пиллесе Ху Турӑ Ывӑлӗ иккене, тӗнђене ҫӑлма килнине тата ытларах ӗнентернӗ.

*Кондак, 6-мӗш кӗвӗие.* Ей Христос Туррӑмӑр, Есӗ пире ҫӑлас ӗҫне туса



пӗтерсен, ҫӗр ҫинђисене ҫӳлтисемпе пӗрлештерсен, аслӑлӑхна кӑтартса ҫӳле ҫӗкленнӗ. Ху никӑҫан та пиртен уйӑрӑлмасӑр тӑратӑн. Есӗ Хӑна йуратакансене каланӑ: Епӗ сирӗнпе, сире хирӗҫ никам та тӑраймӗ, тенӗ.

*Аллӑмӗш кунхи праҫник.*

*Тропарь, 8-мӗш кӗвӗпе.* Ей Христос Туррӑмӑр, Есӗ мухтавлӑ, Есӗ Святой Сывлӑша антарса пулӑҫӑ ҫынсене пит ӑслӑ тунӑ, вӗсен урлӑ пӗтӗм тӗнђе халӑхне Хӑна ӗнентернӗ: ей етеме савакан Турӑ мухтав Сана.

*Кондак, 8-мӗш кӗвӗпе.* Ӗлӗк ҫӳлти Турӑ анса етем ђӗлхине аташтарнӑ, тӗрлӗ ђӗлхе кӑларнӑ, пайанхи кун вут ђӗлхесем валеҫсе парса пурне те пӗрле пулма ђӗннӗ: ҫавӑнпа пурсӑмӑр та пӗр пулса, Святой Сывлӑша мухтаса йурлатпӑр.

*Туррӑн таса Амӑшӗ вилни. Ҫурла уйӑхин (августӑн) 15 кунӗнт̧е.*

*Тропарь, 1-мӗш кӗвӗпе.* Ей Турра ҫуратнӑ Хӗр, Есӗ Ат̧а ҫуратсан та хӗрхаллӗн йулнӑ, ку тӗнт̧ерен кайсан та ку тӗнт̧ене пӑрахман; т̧ӗрӗлӗх Паракӑнӑн Амӑшӗ пулса, т̧ӗрӗлӗх Паракан патне куҫнӑ, Есӗ Ху кӗл-тунипе пирӗн т̧унсене вилӗмрен ҫӑлса тӑратӑн.

*Кондак, 2-мӗш кӗвӗпе.* Турӑ умӗнт̧е т̧арӑнмасӑр кӗл-тӑвакан, Турӑ умӗнт̧е тархасласа пурне те шантарса тӑракан Турӑ Амӑшне тупӑкпа вилӗм тытса илеймен: ӗмӗрех таса халлӗн тӑракан Хӗр ӑшне вырӑнаҫакан Христос Ӑна, Т̧ӗрӗлӗх Амӑшне, т̧ӗрӗлӗх Паракан патне куҫарнӑ.

*Т̧ӗрӗлӗх паракан таса Хӗресе ҫӗклесе кӑтартни. Авӑн уйӑхин (сентябрӗн) 14 кунӗнт̧е.*

*Тропарь, 1-мӗш кӗвӗпе.* Ей Турӑ, етем-



мӳсене ҫӑл, Хӑвӑн халӑхна ырӑ курмалла ту, т̧ӑн тӗне тӗрӗс тытса тӑракан пирӗн Аслӑ Патшана НИКОЛАЙ АЛЕКСАНДРОВИЧА тӑшмансене ҫӗнтерме вӑй-хӑват пар, патшалӑхна Хӑвӑн Хӗресӳ хӑват̧ӗпе усра.

*Кондак, 4-мӗш кӗвӗпе.* Ей хӗрес ҫумне Ху ирӗкӳпе пӑталаннӑ Христос Турӑ, Ху йатлӑ ҫӗнӗ халӑхна ырӑлӑх кӑтарт; т̧ӑн тӗне тӗрӗс тытса тӑракан пирӗн Аслӑ Патшана НИКОЛАЙ АЛЕКСАНДРОВИЧА хӑватна кӑтартса савӑнтар, тӑшманӗсене ҫӗнтерттер, канӑҫлӑх кӳрекен, никам ҫӗнейми хӑватлӑ Хӗресӳпе Ӑна пулӑшса тӑр.

## VI.

## АСЛӐ СВЯТОЙСЕНӖН, ТАТА ПАЛЛӐ ПРАҪНИКСЕНӖН ТРОПАРӖСЕМПЕ КОНДАКӖСЕМ.

*Евангеліе ҫыракан св. Іоанн Богослов Апостол вилнине асӑнса уйани. Авӑн уйӑхин (сентябрӗн) 26 кунӗнт̧е.*

*Тропарь, 2-мӗш кӗвӗпе.* Ей Христос Турӑ савнӑ Іоанн апостол! нимӗн каласа тӳрре тухма пӗлмен халӑха ҷасрах хӑтар: сана Хӑй кӑкӑри ҫине илекен Турӑ есӗ пуҫҫапса тархасланине хапӑл илет; ей Турӑ ҫинҷен вӗрентекен апостол, пирӗн валли канлӗхпе аслӑ ырӑлӑх ыйт, суйа тӗнлӗ халӑхсем ҫинҷе тӑракан тӗтрене сирсе йама Христос Турра тархасла.

*Кондак, 2-мӗш кӗвӗпе.* Ей таса халлӗн пурӑннӑ апостол, сан аслӑлӑхна кам пӗлсе ҫитерӗ? Ху Турӑ ҫинҷен вӗрентекен пулнипе, Христосӑн савнӑ апостолӗ пулнипе есӗ хӑватлӑ ӗҫсем тӑватӑн, ҷирсене тӳрлететӗн, пирӗн ҷунсемшӗн Турра тархаслатӑн.

*Пире пӑхса усракан Турӑ Амӑшӗ тҷӑн таса ӗмӗр-Хӗр Марія пире витсе усранине уйани (Покровъ). Йупа уйӑхин (октябрӗн) 1 кунӗнҷе.*



*Тропарь, 4-мӗш кӗвӗпе.* Ей Турӑ Амӑшӗ, епир ӗненекенсем Есӗ килнӗ ырӑлӑхпа витӗнсе тӑратпӑр; пайанхи кун савӑнса праҫник тӑватпӑр, таса сӑну ҫине пӑхса Сана ҷунтан тархаслатпӑр: Хӑвӑн таса хӳттӗнте витсе усра пире, тӗрлӗ усал-тӗселтен сыхла, ҷунӑмӑрсене ҫӑлма Хӑвӑн Ывӑлна, пирӗн Христос Туррӑмӑра тархасла.

*Кондак, 3-мӗш кӗвӗпе.* Пайанхи кун ҷиркӳре таса Хӗр тӑрат, Вӑл святойсен ушкӑнӗсемпе курӑнми тӑрса пирӗншӗн Турра тархаслат, Турӑ Амӑшӗ ӗмӗрхи Турра пирӗншӗн тархасланӑшӑн архіерейсемпе ангелсем Ӑна пуҫҫапаҫҫӗ, пророксемпе апостолсем хӗпӗртесе тӑраҫҫӗ.

*Хусанта тҷи малтан архіепископ пулнӑ Гурійӗннипе Твер хулинҷе епископ пулнӑ Варсонофійӗн ҫӗрмен таса ӳтҷӗсине ҫӗртен кӑларни. Йупа уйӑхин (октябрен) 4 кунӗнҷе.*

*Тропарь, 4-мӗш кӗвӗпе.* Ей Гурійпа

Варсонофій, есир ĕлĕк тĕттĕмре пурăннă Хусан хулине малтан вĕрентекенсем пулнă, халĕ вăл хула есир вĕрентнипе çутăлса тăрат, çăлăнăç çулне есир унта ţи малтан пĕлтернĕ, апостолсем вĕрентсе хăварнине тĕрĕс тытса сыхласа пурăннă, хускалми йупа пек тĕреклĕ пулнă, ţăн тĕне тĕрĕс тытса, ырă пурăнма вĕрентнĕ. Пурсăмăра та тытса тăракан Патша Туррăмăра тархаслăр: Вăл тĕнţене канлĕхлĕ усринţţĕ, пирĕн ţунсене пысăк ырăлăх паринţţĕ.

*Святой Гурійĕн кондакĕ, 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей святой Гурій, есĕ ўт ţарусăрлăхне çĕнтерсе ĕмĕрў иртетţенех таса пурăннă, тасалăхупа хĕвел пек çутăлса тăнă; нумайĕшне ĕненмен çĕртен ĕнентерсе Христос йенне çавăрнă; çавăнпа Турă санăн ўтне çĕрми туса хисепленĕ, хăватусемпе тĕлĕнтерекен тунă. Епир сана тархаслатпăр: ху кĕллўпе пире инкекрен хăтарса тăр; сана: ей пит тĕлĕнтерекен атте, савăн! есĕ Хусанăн мухтавĕ те, тĕрекĕ те, тесе ţĕнер.



*Святой Варсонофійĕн кондакĕ, 6-мĕш кĕвĕпе.* Ей Святой Варсонофій, есĕ ţăтăмлăхупа ху ўтне ţунна пăхăнтарнă, ţунна ангелăнни пек тунă; çавăнпа сана архіерей тивĕçлĕхĕпе хисеплессĕ; есĕ тасалăхупа таса Турă умĕнţе тăратăн: пире ХАЙ ирĕкĕпе пăхса, ţăн тĕне тĕрĕс тытса, сыхласа тăракан АСЛĂ ПАТШАМĂРА, хăвăн пур етеммўсене те çăлма Христос Турра тархасла; епир сана: ей святой Варсонофій атте, савăн! есĕ пирĕн Хусан хулин мухтавĕ те, тĕрекĕ те, тесе ţĕнер.

*Москвара пурăннă святой митрополитсене Петра, Алексійа, Іонана, Филиппа асăнса уйăни. Йупа уйăхин (октябрĕн) 5 кунĕнţе.*

*Тропарь, 4-мӗш кӗвӗпе.* Ей Петр, Алексій, Іона, Филипп, есир Вырӑс патшалӑхин ꚓи аслӑ хулинꚓе пулнӑ архіерейсем, апостолсем вӗрентсе хӑварнине тӗрӗс тытса, сыхласа пурӑннӑ, хусканми йупа пек тӗреклӗ пулнӑ, ꚓӑн тӗне вӗрентнӗ. Пурсӑмӑра та тытса тӑракан Патша Туррӑмӑра тархаслӑр: Вӑл тӗнꚓене канлӗхлӗ усринꚓꚓӗ, пирӗн ꚓунсене пысӑк ырӑлӑх паринꚓꚓӗ.

*Кондак, 3-мӗш кӗвӗпе.* Архіерейреꚓух есир таса, ырӑ пурӑннӑ, ҫынсене Турра пӗлме вӗрентнӗ, Турра лайӑх йуранӑ; ҫавӑнпа Вӑл сирӗн ӳтӗре ҫӗрми туса хӑватӑрсемпе ꚓапа кӑларнӑ; сире Турӑ тивлеꚓӗ вӗрентсе тӑнӑ.

*Ꚓӑн таса Турӑ Амӑшин Хусанти сӑнне аслӑласа уйани. Йупа уйӑхин (октябрӗн 22 кунӗнꚓе.*

*Тропарь, 4-мӗш кӗвӗпе.* Ей ҫӳлти Туррӑн Амӑшӗ, Есӗ пирӗншӗн тӑрӑшса

Библиотека храма "Новомучеников и Исповедников Российских" г. Чебоксары Инв.№ 9048



хута кӗретӗн, пуриншӗн те Хӑвӑн Ывӑлна Христос Туррӑмӑра тархаслатӑн, Хӑвӑн хӑватлӑ хӳтлӗхне пыракансене пурне те ҫӑлатӑн. Ей пире тытса тӑракан, пире пӑхса усракан Турӑ Амӑшӗ, пурӑмӑршӑн та хута кӗр! инкек куракансемшӗн, хуйхӑпа аптӑранисемшӗн, ꚓирпе выртакансемшӗн, ҫылӑх нумайипе хӗн куракансемшӗн, халӗ Ху умӑнта ꚓӑн таса сӑну ҫине пӑхса йӗрсе, ꚓӗрисене ҫемҫетсе, ӳкӗнсе ꚓунтан кӗл-тӑвакансемшӗн, пӗр Сан ҫине анꚓах шанса тӑракансемшӗн, пуриншӗн те хута кӗр; Есӗ тӗрлӗ усалтан хӑтарса тӑратӑн, пурне те усӑ кӑтарт, пурне те ҫӑл; ей Турра ҫуратнӑ таса Хӗр, Есӗ Ху ꚓурусене витсе тӑракан Турӑ хӳтлӗхӗ.

*Кондак, 8-мӗш кӗвӗпе.* Ей халӑхсем! канлӗ, аван вырӑн паракан, ꚓас пулӑшакан, пире ҫӑласшӑн кӑмӑлӗнꚓен тӑрӑшакан таса Хӗр хӳтлӗхне пырар,

ꚋасрах кӗл-тӑвар, ҫылӑхсенꚋен ӳкӗнме васкар: таса Турӑ Амӑшӗ пире иксӗлми ырӑлӑхне парать, ꚋас ꚋасах пире пулӑшма килет, Хӑйӗн ырӑ кӑмӑллӑ ꚋурисене, Турӑран хӑракан ꚋурисене пысӑк инкекрен, тӗрлӗ усалтӗселтен хӑтарса тӑрать.

*Туррӑн ꚋӑн таса Амӑшин хурлӑх куракансене пурне те савӑнтаракан сӑнӗ йатꚋӗпе тӑвакан праҫник. Йупа уйӑхин (октябрӗн) 14 кунӗнꚋе.*

*Тропарь, 4-мӗш кӗвӗпе.* Епир ҫылӑхлӑ, мӗскӗн ҫынсем пайан Турӑ Амӑшӗ патне тӑрӑшса пуҫтарӑнар, ҫылӑхран ӳкӗнсе, ӳксе пуҫҫапса ꚋунтанвартан тархаслар. Ей пире пӑхса усракан Турӑ Амӑшӗ, пулӑшсам пире, пирӗн ҫийе хӗрхенсе пӑх, тӑрӑшса пирӗн хута кӗр, темӗн ꚋухлӗ ҫылӑха кӗнипе пӗтетпӗр, ꚋурусене ахаꚋ тавӑрса ан йар: епир Сан ҫине анꚋах шанса тӑратпӑр.



*Тепӗр, тропарь, ҫав кӗвӗпех.* Ей Турӑ Амӑшӗ, епир йурӑхсӑр ꚋурусем Сан хӑватусем ҫинꚋен каласма нихӑҫан та ꚋарӑнас ҫук: есӗ пирӗншӗн Турӑ умӗнꚋе хута кӗрсе тархасламасан, ҫак тӗрлӗ хӗнсенꚋен пире кам хӑтарӗꚋꚋӗ? ҫак таранꚋꚋен кам тӗрӗс усрӗꚋꚋӗ? Ей пире пӑхса усракан Турӑ Амӑшӗ, епир санран нихӑҫан та уйӑрлассӑмӑр ҫук: есӗ ху ꚋурусене тӗрлӗ усалтан йаланах ҫӑлса тӑратӑн.

*Кондак, 6-мӗш кӗвӗпе.* Ей Туррӑн ꚋӑн таса Амӑшӗ, санран пуҫне пире пулӑшаканни, епир шанса тӑмалли урӑх никам та ҫук; пире Есӗ пулӑшсам, Сан ҫине шанса тӑратпӑр, Санпала мухтанатпӑр: епир Санӑн ꚋурусем, намӑса ан йулар.

*Хусанта иккӗмӗш архіепископ пулнӑ святой Герман вилни. Ꚋӳк уйӑхин (ноябрӗн) 6 кунӗнꚋе.*

*Тропарь, 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей святой Герман, есĕ çамрăкранах Христос панă ĕçе кăмăлунтан тытăннă. Тăрăшса типĕ тытса кĕл-тунипе мухтава тухнă. Çапла пурăннăшăн Турă Сана святой Гурiйпа пĕрле ҭиркӳ ĕçĕсене туса пурăнма çĕнĕрен тĕне кӳртсе çутăлтарнă Хусан патшалăхне ҭĕннĕ. Есĕ Сĕве хулинҭе ху лартнă монастыре малтанхи пуçлăх пулнă, Хусана малтанхи архiерей хыççăн архiерейе кĕме тивĕçлĕ пулнă. Ӳтӳ санăн ху лартнă монастырте канса выртат̆, ҭуну Турă умĕнҭе тăрат̆. Ей пире çутăлтаракан Герман атте, ху пекех халăха çутăлтаракан Гурiйпа пĕрле пирĕншĕн Турра кĕл-ту: есĕ лартнă монастыр малашне те таса тăтăрҭҭĕ, есир Турра тĕрĕс ĕненсе пурăнма вĕрентнĕ халăх та сăваплă пурăнтăр, суйа тĕн тĕттĕмĕ ҭăн тĕн çуттипе çутăлса пытăр.



*Кондак 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей Святой Герман атте, есĕ ывăннине пĕлмесĕр кĕлтунă, монах тăванусемшĕн тăрăшакан ырă пуçлăх пулнă, ху ҭунна ҭăтăмлă усраса çăлăнмалла тунă; кăмăлна асла хумасăр пит йăваш пурăннă, ҭăн тĕне тытса сăваплă ĕççем туса тăрса архiерей вырăнне илем кӳртнĕ. Халĕ те ху монастырӳпе ху пăхса тăнă халăхушăн Христос Турра тархасла: есĕ ху халăхун шанҭăкĕ, ху хыçăнти архiерейсене илем кӳрекен çутă.

*Михаил Архангелпа ытти ӳтĕср сывлăшсене те асăнса уйани. Ҭӳк уйăхин (ноябрĕн) 8 кунĕнҭе.*

*Тропарь, 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей çӳлти ангел çарĕсенĕн пуçлăхĕсем, епир тивĕççĕр çынсем йаланах сире тархаслатпăр; пирĕншĕн кĕл-туса хăвăрăн хăватлă курăнми çунатăрсемпе пире хӳтĕлесе тăрăр; пире тĕрлĕ инкекрĕн

хӑтарӑр тесе, тӑрӑшса пуҫҫапса йӑлӑнакансене сыхласа тӑрӑр: есир ҫӳлти ангелсенӗн аслӑ пуҫлӑхӗсем.

*Кондак, 2-мӗш кӗвӗпе.* Ей Турӑ ҫарӗ пуҫлӑхӗсем, Турӑ мухтавӗшӗн ӗҫлекенсем, ангелсен хушшинҫе аслисем, етемсене вӗрентекенсем, Турӑран пире усӑлӑ пысӑк ырӑлӑх ыйтӑрсам: есир ӳтсӗр ангелсенӗн ҫар пуҫлӑхӗсем.

*Иркут хулинҫи хӑватсем тӑвакан святой Иннокентій епископа асӑнса уйӑни. Ҫӳк уйӑхин (ноябрен) 26 кунӗнҫе.*

*Тропарь, 3-мӗш кӗвӗпе.* Ей Иннокентій архіерей атте, есӗ Христоса ӗненекенсене ҫутнӑ ҫурта пек ҫутатса тӑратӑн, сан ӗҫӳсенӗн ырӑлӑхӗ пӗтӗм ҫак ҫӗре сарӑлнӑ; ху выртакан тупӑку патне ӗненсе пыракан ҫынсене тӗрлӗ ҫиртен сыватса тӑнипе Турра мухтава кӑларнӑ. Епир сана тархаслатпӑр: ҫак хулана пур инкекрен те, пур хуйхӑран та хӑтарса тӑр.



*Кондак 4-мӗш кӗвӗпе.* Ей ӗненекенсем, йаҫӗ те Айӑпсӑр йатлӑ архіерейе пурсӑмӑр та йуратса мухтар: вӑл монгол халӑхӗсен хушшинҫе ҫӑн тӗне вӗрентсе сарнӑ, Иркут ҫӗрӗнҫи хӑй пӑхса тӑнӑ халӑхӑн илемӗ те, мухтавӗ те пулнӑ; халӗ вӑл ҫав ҫӗре сыхласа тӑрать, пирӗн ҫунсемшӗн Турра кӗл- тӑвать.

*Ликіяри Миры хулинҫи хӑватсем тӑвакан сеятой аттемӗр Николай архіепископ вилни. Раштав уйӑхин (декабрӗн) 6 кунентҫе.*

*Тропарь, 4-мӗш кӗвӗпе.* Ей священниксен пуҫлӑхӗ Николай атте, есӗ ху пӑхса тӑнӑ халӑхна тӗрӗс ӗҫсем тума кӑтартнӑ: ҫӑн тӗнпе пурӑнма, йӑваш пулма, ҫарулӑ пурӑнма вӗрентнӗ; есӗ ху та йӑваш ҫын пулса асла тухнӑ, ҫухӑн пурӑнса ҫӳлти пуйанлӑха тупнӑ; пирӗн ҫунсене ҫӑлма Христос Турра тархасла.

*Кондак, 3-мӗш кӗвӗпе.* Ей таса пуранна святой Николай, есӗ Христос Евангелійӗ хушнă пек пурăнса, Миры хулинҫе Турăшăн ӗҫлекен пулнă, Ху халăхушăн ҫунна панă, айăпсăрсене вилӗмрен ҫăлнă, Турă ырăлăхин аслă пайне кӗме тивӗҫлӗ пулса святойа тухнă.

*Іисус Христос Туррăмăрăн ӳтне каснине уйани. Кăрлатҫăн (январӗн) 1 кунӗнҫе.*

*Тропарь, 1-мӗш кӗвӗпе.* Ей Іисус, Есӗ вут пек курăнакан ҫӳлти ырăну синҫен, ӗмӗрхи Аҫупа, Хăвăн Сывлăшупа пӗрле ларнă ҫӗртен килсе, Хăвăн арсăр Аннӳ таса Хӗртен ҫуралма кăмăл тунă; ҫавăнпа сакăр куна ҫитсен, Есӗ етем пек ӳтне кастарнă. Санăн ырă ăсу мухтавлă пултăр, Есӗ етеме ҫăласшăн тăрăшни мухтавлă пултăр, Есӗ етеме хӗрхенни те мухтавлă пултăр: пӗр Есӗ анҫах етеме савакан Турă.

*Кондак, 3-мӗш кӗвӗпе.* Пуринӗн те-



Турри Хăй ӳтне кастарнă, ун тăрăх Вăл Хăй ырăлăхӗпе етем ҫылăхӗсене касса тăкнă, пайанхи кун тӗнҫе халăхне ҫăлнă; пурне те пултаракан Туррăн ҫутăлса тăракан архіерейӗ Турă ырăлăхне пайа кӗнӗ Христос ҫынни Василій, уншăн ҫӳлте савăнса тăрат.

## *Ҫӗнӗ ҫулăн.*

*Тропарь, 2-мӗш кӗвӗпе.* Ей, пурне те пултарнă Турă, Есӗ вăхăтсене, ҫулсене Ху ирӗкӗнте тытса тăратăн. Ҫак ҫул тăрăшшӗне те Ху ырăлăхăнта пурăнса ирттерме пилле, Турă Амăшӗ кӗллипе АСЛА ПАТШАМАРПА Ху хулуна канлӗхре усра, пире те ҫăл.

*Кондак, 2-мӗш кӗвӗпе.* Ей ҫӳлте пурăнакан Христос Патша, Есӗ курăнаканнине, курăнманнине пурне те пултарнă, пурне те туса ҫитернӗ; кунсене, ҫӗрсене, вăхăтсене, ҫулталăксене те Есех тунă. Ей нумай ырă-

лăхлă Турă, çак çул тăрăшшĕне те ырăлăхупа пилле, ђăн тĕне тĕрĕс тытса тăракан АСЛĂ ПАТШАМĂРА, хулуна, етеммÿсене те пăхса ђусра.

*Каппадокіяри Кесарія хулинђе архіепископ пулнă святой Аслă Василийа асăнса уйани. Кăрлађăн (январĕн) 1 кунĕнђе.*

*Тропарь, 1-мĕш кĕвĕпе.* Ей таса пурăннă святой Василий атте, есĕ Турă çинђен вĕрентни пур çĕре те сарăлнă: есĕ Турра йурăхлă вĕрентнĕ, ху вĕрентнине йышăннисене тĕнђери йапаласем йепле пулса пынине ăнлантарнă, етем пурăнăçин йĕркине илем кÿртнĕ; пирĕн ђунсене çăлма Христос Турра тархасла.

*Кондак, 3-мĕш кĕвĕпе.* Ей таса пурăннă Василий атте, есĕ пĕлĕт çинђен аннă пек, ђиркĕвĕн хускалми никĕсĕ пулнă; етемсене пурне те хăйсен туртса илме çук аслăлăхне кăтартса,



ăна тытса пурăнма хушса хăварнă.

*Тĕнђе халăхне вĕрентекен виçĕ архіерей: Василий Великийа, Григорий Богослова, Іоанн Златоуста асăнса уйани. Кăрлађăн (январĕн) 30 кунĕнђе.*

*Тропарь, 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей апостолсенĕн кăмăлне тытса тĕнђе халăхне вĕрентекенсем, пурне те тытса тăракан Турра тархаслăр, Вăл тĕнђе халăхне канăçлăх паринђĕ, пирĕн ђунсене пысăк ырăлăх тăвинђĕ.

*Кондак, 2-мĕш кĕвĕпе.* Ей Турă, Ху çинђен халăха вĕрентсе çутăлтарнă Святойсене, ытти вĕрентекенсенђен ђи аслисене ырă курса пурăнма Есĕ Ху канăçлăхна кÿртнĕ, вĕсем асапланса пурăнса вилнине çимĕçрен кÿрекен пур тĕрлĕ парнесенђен те мала илнĕ: святойсене пĕр Есĕ анђах асла кÿртетĕн.

*Тăшмансене çĕнтерекен пит хытă асаплантарнине тӳссе вилнĕ ҫаплă святой Георгійе асăнса уйани. Ака уйăхин (апрѣлĕн) 23 кунĕнҫе.*

*Тропарь, 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей пит хытă асаплантарнине тӳссе вилнĕ Георгій, есĕ тыткăнра лараканеене ирĕке кăларакан, мĕскĕнсенĕн хутне кĕрекен, ҫирлисене ҫĕртекен, патшасене пулăшакан, тăшмансене çĕнтерекен святой, пирĕн ҫунсене çăлма Христос Турра тархасла.

*Кондак, 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей святой Георгій, есĕ ырă ĕçсен кĕлтисене пухса, Турра тĕрĕс хисеплесе пурăнма хăна Турă хатĕрленине кăтартнă. Есĕ кусçулĕпе акнине хĕпĕртесе выратăн, йун йухиҫҫен асап курса Христоса тупнă; халĕ ху кĕллӳпе пурин çылăхĕсене те каçарттаратăн.



*Пермре епископ пулнă святой Стефан аттемĕре асăнса уйани. Ака уйăхин (апрѣлĕн) 26 кунĕнҫе.*

*Тропарь, 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей пит ăслă Стефан, Есĕ çамрăкранах кăмăлна Турă йенне йарас шухăш тытнă. Христос çĕклемне йышăннă; суйа тĕнлĕ çынсенĕн авалтанпах пăрланнă ҫĕрисен ăшне Турă сăмахне акнă, вĕсен ҫунĕсем Евангеліере каланă лек çĕнĕрен çуралнă. Çавăнпа сана хисеплесе асăнса йăлăнатпăр; пирĕншĕн ху йĕненме вĕрентнĕ Турра кĕл-ту: Вăл пире çăлинҫҫĕ.

*Кондак, 8-мĕш кĕвĕпе.* Ей Стефан архіерей, есĕ хăна шыраман халăх патне хăвах пынă, вĕсене киремет ултавĕнҫен хăтарса, Христос тĕнне тыттарнă. Пан йатлă асамăç пуçлăхне суйине кăларса намăслантарнă; çав тăрăх есĕ Пермре малтанхи архіерей пулса халăха вĕрентекен пулнă.

Есӗ пире киреметсенҭен хӑтарнӑ; епир, санӑн Турӑ умӗнҭи аҭусем, сана тав-туса йурлатпӑр: ей пит ӑслӑ вӗрентекен Стефан, савӑн! тетпӗр.

*Монахсенӗн пуҫлӑхӗ, ҫӗр пӳртре пурӑннӑ святой Ѳеодосій атте вилни. Ҫӑв уйӑхин (майӑн) 3-мӗш кунӗнҭе.*

*Тропарь, 8-мӗш кӗвӗпе.* Ей Ѳеодосій атте, есӗ ырӑ ӗҫсем туса пурӑнма шухӑш тытнӑ, монах пурӑнӑҫне ҫамрӑклах йуратнӑ та, ху ӗмӗтленнине пӗтӗмпех курнӑ: есӗ ҫӗр пӳрте вырӑнаҫнӑ, типӗ тытса пурӑннипе ҫутӑлса илемленнӗ, кӗл-туса ӳтсӗр сывлӑш пек пурӑннӑ, Вырӑс ҫӗрӗнҭе ҫап-ҫутӑ ҫута̀тса тӑнӑ; пирӗн ҭунсене ҫӑлмашкӑн Христос Турра тархасла.

*Кондак. 3-мӗш кӗвӗпе.* Пайанхи кун телейлӗ Ѳедосійа асӑнар: вӑл Вырӑс патшалӑхӗнҭи ҫӑлтӑр пек, хӗвел тухӗҫӗ йенҭе ҫутӑлса тухса хӗвел анӑҫнелле пынӑ, Вырӑс патшалӑхне пӗ-



тӗмпех хӑйӗн хӑватлӑ ӗҫӗсемпе, ырӑлӑхӗпе пуйтарнӑ; монах пурӑнӑҫин йӗркине вӗрентсе хӑварса, пурсӑмӑра та ырӑлӑх кӑтартнӑ.

*Хӑватлӑ ӗҫсем тӑвакан святой Николайӑн ҫӗрмен таса ӳтне Миры хулинҭен Бар хулине куҫарни. Ҫӑв уйӑхин (майӑн) 9 кунӗнҭе.*

*Тропарь. 4-мӗш кӗвӗпе.* Савӑнса праҫник тумалли кун ҫитрӗ; Бар хули савӑнат̆, унпа пӗрле пӗтӗм тӗнҭе савӑнса тӑрат̆, ҭиркӳ йуррисем йурлат̆. Пайан хӑватлӑ ӗҫсем тӑвакан Николай архіерейӗн нумай ҭирсене тӳрлетекен ҫӗрмен таса ӳтне куҫарнӑ йӗркепе савӑнса уйамалли кун; вӑл анса ларми хӗвел пек ҫап-ҫутӑ ҫутӑлса тухнӑ, хӑйне: ей аслӑ Николай, пире ҫӑлса тӑр, есӗ пирӗн хута кӗрекен тесе ӗненсе йӑлӑнакансене ҫылӑх тӗттӗмӗнҭен, тӗрлӗ

инкекрен хăтарса тăраť.

*Кондак, 3-мĕш кĕвĕпе.* Ей Николай архіерей санăн çĕрмен ўтў çăлтăр пек, хĕвел тухĕç йенђен тухса, хĕвел анăçнелле кайнă; есĕ пынипе тинĕс шывĕ тасалнă, сан урлă Бар хулите Турă тивлеђĕпе çуталнă, есĕ хăватсем тăвакан, тирпейлĕ, тĕлĕнмелле, хĕрхенекен кăмăллă Святой пирĕншĕн килнĕ.

*Славянсене вĕрентекен апостолсемпе пĕр тан святой Кирилпа Меѳодійе асăнса уйани. Çăв уйăхин (майăн) 11 кунĕнђе.*

*Тропарь, 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей Турă ăса кўртнĕ Кириллпа Меѳодій, есир апостолсем пек пулса, славян çĕрĕнђи халăхсене вĕрентнĕ; славян халăхĕсем пур те пĕр шухăшлă пулса ђăн тĕне тĕрĕсрех пĕлсе çитмешкĕн, тĕнђе килĕшўлĕ пурăнмашкăн, пирĕн ђунăмăрсем те çăлăнмашкăн пурне те тытса тăракан Турра тархаслăр.



*Кондак, 3-мĕш кĕвĕпе.* Турă тивлеђĕпе хамăра вĕрентсе çутăлтарнă иккĕн пĕр-тăван Святойсене асăпар; вĕсем Турă çыруне куçарса пире Турă çинђен пĕлме çул тупнă. Ей святой Кирилпа Меѳодій, вăл нихăçан пĕтми çырусенђен епир пайанхи кунђенех вĕренсе сире аслăлатпăр: есир çўлти Туррăн ђаплă вырăнĕ умĕнђе тăратăр, пирĕн ђунсемшĕн ăшă кăмăлăртан Ăна кĕл-тăватăр.

*Апостолсемпе пĕр тан святойсене Константин патшапа унăн амăшĕ Еленана асăнса уйани. Çăв уйăхин (майăн) 21 кунĕнђе.*

*Тропарь, 8-мĕш кĕвĕпе.* Ей Турă, Павела Санăн апостолу пулма çын хуман, çаваň пек Патша-Апостолу та пĕлĕт çинђе Санăн хĕресў паллине курсан, хăй пурăнакан аслă хулине

Сан аллуна шанса панӑ; вӑл хулана Турӑ Амӑшӗ кӗллипе ҫӑлса йалан канлӗхре усра: пӗр Есӗ анҭах етеме савакан Турӑ.

*Кондак, 3-мӗш кӗвӗпе.* Константинпа унӑн Амӑшӗ Елена пайанхи кун пур те хисеплекен йывӑҫ Хӗресе кӑтартнӑ; вӑл Хӗрес Іудея ҫыннисене пурне те вӑтантарат̆, тӑшмансемпе вӑрҫнӑ ҭух ӗнепекен патшасене пулӑшат̆; тӑшмансене хӑратакан ҫак аслӑ паллӑ пирӗншӗн тупӑннӑ.

*Христос умӗн килнӗ, Турра шыва кӳртекен святой Іоанн пророк ҫурални. Ҫӗртме уйӑхин (іюнӗн) 24 кунӗнҭе.*

*Тропарь, 4-мӗш кӗвӗпе.* Ей Христос умӗн килнӗ Пророк, епир, сана йуратса хисеплекенсем, сана тивӗҫҫипе мухтама пӗлейместпӗр: есӗ хисеплӗ, мухтавлӑ ҫуралсан, санӑн аҭа туман аннӳ аҭалӑ пулнӑ, ҭӗлхесӗр пулнӑ



асӑвӑн ҭӗлхи усӑлнӑ, Турӑ Ывӑлӗ ӳтленсе ҫуралас хыпар тӗнҭене сарӑлнӑ.

*Кондак. 3-мӗш кӗвӗпе.* Малтан аҭа тумасӑр пурӑннӑ арӑм пайанхи кун Христос умӗн килмелли Пророка ҫуратнӑ, пророксем каланӑ сӑмахсем пур те вырӑна килнӗ: ун синҭен пророксем малтанах каласа пӗлтернӗ Христос ҫине Іордан шывӗ ҫинҭе алӑ хунипе вӑл Турӑ сӑмахне пӗлтерекен, Турӑ ҫинҭен вӗрентекен, Христос умӗн килнӗ Пророк пулнӑ.

*Аслӑ апостолсене святой Петрпа Павела асӑнса уйани. Ҫӗртме уйӑхин (Іюнӗн) 29 кунӗнҭе.*

*Тропарь, 4-мӗш кӗвӗпе.* Ей апостолсен хушшинҭе ҭи аслӑ вырӑнта ларакансем, тӗнҭери халӑха вӗрентекенсем, пурне те тытса тӑракан Турра тархаслӑр: Вӑл тӗнҭене канлӗ тӑ-

ратинҫӗ, пирӗн ҫунсене пысӑк ырӑлӑх паринҫӗ.

*Кондак, 2-мӗш кӗвӗпе.* Ей Турӑ, Есӗ ҫак Ху пӗлтернине тӗреклӗ вӗрентсе саракенсене, ытти апостолсенҫен ҫи аслисене ырӑ курса пурӑнма Ху канӑҫлӑхна кӳртнӗ, вӗсем асап курса вилнине ҫимӗҫрен кӳрекен пур тӗрлӗ парнесенҫен те мала илнӗ. Пӗр Есӗ анҫах ҫерери шухӑшсене пӗлетӗн.

*Радонежри хӑватсем тӑвакан святой Сергій монах аттемӗрӗн ҫӗрмен таса ӳтне тупса кӑларни. Утӑ уйӑхин (іюлӗн) 5 кунӗнҫе.*

*Тропарь, 8-мӗш кӗвӗпе.* Ей таса пурӑннӑ Сергій атте, есӗ ҫамрӑкранах Христоса ҫунупа йышӑннӑ, ҫавӑнпа пуринҫен ытла тӗнҫе пӑлхавӗнҫен тарас тесе тӑрӑшнӑ. Есӗ пикенсех пушӑ ҫӗре кайса вырӑнаҫнӑ, унта итлекен аҫа пек йӑваш пурӑнма вӗренсе ҫитнӗ. Санӑн ӑшна



Виҫ-ипостаҫлӗ Турӑ вырӑнаҫнӑ; есӗ ху патна ӗненсе пыракансене хӑватсем кӑтартса вӗрентсе ҫутӑлтарнӑ. Халӗ пурсӑмӑра та ҫирсенҫен сыватса тӑрса Христос Турра тархасла, Вӑл пирӗн ҫунсене ҫӑлинҫӗ.

*Кондак, 8-мӗш кӗвӗпе.* Ей Сергій атте, пайанхи кун санӑн таса ӳтӳ ҫӗртеп хӗвел пек ҫап-ҫутӑ ҫутатса йанӑ, ҫӗрмен халлӗнех вӑл ырӑ шӑршӑлӑ ҫеҫек пек тупӑннӑ, темӗн ҫухлӗ хӑватсем туса ҫутӑлса тӑнӑ, пур ӗненекенсене те тӗрлӗ ҫирсенҫен сыватнӑ, ху ӑспа пухса, ырӑ вӗрентсе пурӑннӑ монах тӑванусене савӑнтарнӑ; халӗ вӗсемшӗн те, тата АСЛА ПАТШАМӐР тӑшманӗсене ҫӗнтертӗр тесе те Виҫ-ипостаҫлӗ Турӑ умӗнҫе кӗл-туса тӑратӑн. Епир сана пурсӑмӑр та: ей Турӑ йеркине пӗлнӗ Сергій атте, савӑн! тесе йурлар.

*Ҫӗр пӳртре пурӑннӑ святой Антоній монах аттемӗре асӑнса уйани. Утӑ уйӑхин (июлӗн) 10 кунӗнҫе.*

*Тропарь, 4-мӗш кӗвӗпе.* Ей таса пурӑннӑ Антоній атте, есӗ халӑх хушшинҫи пӑлхавран тарса ҫӗр ҫинҫи пурӑнӑҫ шухӑшне пӗтӗмпех пӑрахнӑ; Евангеліере каланӑ пек Христос хыҫӗнҫен кайнӑ; ангел пек пурӑнса есӗ таса Аѳон тӑвӗ ҫинҫи лӑпкӑ вырӑна ҫитнӗ; унти аттесенҫен пиллӗх илсе, Кіев тӑвӗ айаккине килнӗ, унта ӗҫлеме йуратса пурӑнса, ху ҫуралнӑ ҫӗр шывна ҫутӑлтарнӑ, монахра пурӑнакансене нумайӗшне ҫӳлти патшалӑх ҫулне кӑтартса, Христос патне йертсе пынӑ; Христос Турра тархасла, Вӑл пирӗн ҫунсене ҫӑлинҫҫе.

*Кондак, 8-мӗш кӗвӗпе.* Ей таса пурӑннӑ Антоній атте, есӗ мӗн ҫамрӑкранах пуринҫен ытла Турра йуратса



ӑна пӑхӑннӑ; ӑна пӗтӗм ҫунӑнтан-варӑнтан йуратнипе Ун хыҫҫӑн кайнӑ; тӗнҫери ҫӗрсе пӗтекен йапаласене нимӗн вырӑнне хумасӑр, есӗ ҫӗр пӳрт тунӑ, ун ӑшӗнҫе ырӑ шухӑшпа кӗл-туса пурӑнса курӑнми тӑшман ҫейелӗхне ҫӗнтернӗ, ҫӗрӗн вӗҫӗхӗррипех хӗвел пек ҫутатса тӑнӑ; ҫӗр пӳртрен пӗлӗт ҫинҫи мухтавлӑ вырӑна савӑнса куҫнӑ; халӗ ӗнтӗ Туррӑн мухтавлӑ вырӑнӗ умӗнҫе ангелсемпе тӑнӑ ҫӗрте пире, хӑна хисеплекенсене, асӑн; епир сана: ей Антоній аттемӗр, савӑн! тесе йурлар.

*Апостолсемпе пӗр танаслӑ князь святой Владиміре тӗне кӗрсен Василій тенине асӑнса уйани. Утӑ уйӑхин (июлӗн) 15 кунӗнҫе.*

*Тропарь, 4-мӗш кӗвӗпе.* Ей халӑха ҫаплӑ тытса тӑнӑ Владимір, есӗ Турӑ сыхлӑхӗнҫе тӑракан пур хуласе-

пӗн амӑшӗ Кіевра аслӑ вырӑнта ларнӑ ҫух ырӑ ахах тупнӑ хуҫа пек пулнӑ; ҫӑн тӗне тӗпҫесе пӗлме Константинополе ҫынсем йанӑ, унта хакне хума ҫук пит паха ҫула Христоса тупнӑ; Вӑл сана тепӗр Павел апостол вырӑнне суйласа илнӗ; тӗне кӳртнӗ таса шывра санӑн ӳт куҫупа пӗрле ҫуну куҫне те уҫнӑ. Епир, санӑн етемм ӳсем, сана ху вилнӗ кун асӑнса уйатпӑр; ху тытса пурӑннӑ Вырӑс патшалӑхӗнҫи пуҫлӑхсем, Христоса йуратса пурӑнакан АСЛА ПАТШАМӐР, Ӑна пӑхӑнса тӑракан пур халӑх та ҫӑлӑнмашкӑн Турра тархасла.

*Кондак, 8-меш кӗвӗпе.* Ей пит мухтавлӑ Владимір, есӗ аслӑ апостол Павел пекех пулнӑ; ҫӳҫ кӑвакарса, ӑс кӗрсе ҫитнӗ ҫын пулса аҫа ӑсӗпе кӑларнӑ киремет таврашӗсене пӑрахнӑ; Турӑ тӗнне кӗне те, ҫаплӑ тутмир тӑхӑнса илемленнӗ. Халӗ ӗн-



тӗ Вырӑс патшалӑхӗнҫи пуҫлӑхсем, вӗсене пӑхӑнса тӑракан пур халӑх та ҫӑлӑнмашкӑн Ҫӑлакан Христоса тархасла: есӗ Ун умӗнҫе савӑнса тӑратӑн.

*Святой мухтавлӑ Илія пророка асӑнса уйани. Утӑ уйӑхин (іюлӗн) 20 кунӗнҫе.*

*Тропарь, 4-мӗш кӗвӗпе.* Ей мухтавлӑ Илія, есӗ ӳтлӗ ангел пек, пророксенҫен ҫи хӑватли, Христос тепӗр хут килес умӗн килмелли; ҫир-ҫӗрсене сирме, усал ҫирсенҫен тасатма есӗ ҫӳлтен Елисей валли хӑват йанӑ; ҫавӑнпа хӑна хисеплекенсене есӗ ҫир-ҫӗрсенҫен сыватса тӑратӑн.

*Кондак, 4-мӗш кӗвӗпе.* Ей Туррӑмӑрӑн аслӑ ӗҫӗсем ҫинҫен малтанах пӗлсе каласа паракан пит ҫаплӑ есӗ каласан, ҫумӑр пӗлӗҫӗсем ҫаранса тӑнӑ; пирӗншӗн етеме йуратакан пӗр Турра тархасла.

*Аиостолсемпе пĕр тан Марія Магдалинана асăнса уйани. Утă уйăхин (іюлĕн) 22 кунĕнђе.*

*Тропарь, 7-мĕш кĕвĕпе,* Ей таса пурăннă Магдалари Марія, есĕ пирĕншĕн Хĕртен çуралнă Христос хыççăн кайнă, Ун сăмахĕсене, Вăл панă йĕркесене тытса пурăннă, çавăнпа пайанхи кун санăн тап-таса пурăнăçна асăнса уйатпăр: есĕ кĕл-тунипе епир çылăхсенђен тасалатпăр.

*Кондак, 3-мĕш кĕвĕпе.* Магдалари мухтавлă Марія Çăлаканăн Хĕресĕ умĕнђе ытти хĕр-арăмсемпе нумайăн тăнă, унта вĕсем Турă Амăшĕпе пĕрле хуйхăрса куç-çулĕпе йĕнĕ; вăл Христоса мухтаса çапла каланă: ку тĕлĕнмелле ĕç мĕне пĕлтерет-ши? пултарнă йапалисене пурне те Хăй ирĕкĕнђ тытса тăракан Турă асап курма кăмăл турĕ; ей Турă, Санăн хăвату мухтавлă пултăр, тенĕ.



*Владимір хулинђи Турă Амăшин хăватлă ĕçсем тăвакан сăнне уйани. Çурла уйăхин (августăн) 26 кунĕнђе.*

*Тропарь, 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей пире пăхса усракан Турă Амăшĕ, пайанхи кунђи мухтавлă хула Мускав çап-çутă çутăлса тăрат, Санăн хĕвел çутти пек çутă, хăватлă ĕçсем тăвакан сăнна кӳртет; епир те пайан вăл сăну умне пухăнса тăрса, Сана йăлăнса тархаслатпăр: ей Туррăн пире пăхса усракан тĕлĕнмелле Амăшĕ! Хăнтан ӳтленсе çуралнă Христос Туррăмăра кĕл-ту: Вăл çак хулана та, пур хуласене те, Христос çыннисем пурăнакан ытти çĕрсене те тăшмансем тĕрлĕ сийен тăвасран хăтаринђђĕ, пирĕн ђунсене те çăлинђђĕ: Вăл ырă кăмăллă.

*Кондак, 8-мĕш кĕвĕпе.* Ей пире пăхса усракан Турă Амăшĕ, Есĕ хăватлă çар пуçлăхĕ пек тăшмансене

çĕнтеретĕн; ырă сăну килсе тăшмансенĕн хăтарнăшăн Сана хирĕç тухса илнине савăнса уйатпăр, йаланхи пек: ей Таса Хĕр савăн! тесе ҫĕнетпĕр.

*Христос умĕн килнĕ, Турра шыва кўртекен Іоанн Пророкăн таса пуçне кастарни. Çурла уйăхин (августăн) 29 кунĕнҫе.*

*Тропарь 2-мĕш кĕвĕпе.* Ей Христос умĕн килнĕ Іоанн! тĕрĕс пурăнса тўрре тухнисене мухтаса асăнма тивĕçлĕ, Сана ху çинҫен Турă каласа пĕлтерни те çителĕклĕ; есĕ ҫăн-ҫăнах пур пророксенҫен те хисеплĕрех, ху каласа пĕлтернĕ Христоса Іордан шывĕнҫе шыва кўртме тивĕçлĕ пулнă, тўрĕ вĕрентнĕшĕн савăнса асапланса вилнĕ, тамăкра асапланакансене тĕнҫе çылăхне Хăй çине илме ўтленсе килнĕ Турă çинҫен ырă хыпар каласа кăтартнă; Вăл пире те пысăк ырăлăх парать.



*Кондак 5-мĕш кĕвĕпе.* Христос умĕн килекен аслă пророк Іоанн пуçне касни Турă çапла хунă пек пулнă: ун тăрăх тамăкра лараксансем унта Çăлакан пырас ырă хыпара илтнĕ. Турă хунă йĕркене хирĕç пырса Іоанн пуçне кастарма ирĕк илнĕ Иродіада уласа макăртăр: вăл Турăхунă йĕркене, ĕмĕр пурăнассине йуратман, çĕр çинҫи суйа, кĕске пурăнăçа йуратнă.

*Ҫăн тĕне тĕрĕс тытса пурăннă Аслă княç святой Александр Невскійĕн çĕрмен ўтне Владиміртан Питĕре куçарни. Çурла уйăхин (августăн) 30 кунĕнҫе.*

*Тропарь, 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей ҫăн тĕне тытса пурăннă Александр княç, есĕ Вырăс патшалăхĕшĕн авалхи Іосиф пек пулнă, анҫах Египетра мар, пĕлĕт çинҫе аслăра ларатăн. Ху тăванусене асăн, вĕсем тархасланине хапăл ту, ху çĕрĕнте пурăнакан

халăха тырă-пулăлă ту, хăвăн патшалăхăнти хуласене Турра кĕл-туса хўтĕлесе тăр, ху вырăнна йулнă ҫăн тĕне тĕрĕс тытса пурăнакан Патшасене тăшманĕсене ҫĕнтерме пулăш.

*Кондак, 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей телейлĕ Александр, есĕ шведсен Вейлгер ҫаррипе вăрҫнă ҫух сана пулăшма пĕлĕт ҫинҫен Борисна Глѣб тăванусем аннă; есĕ те ҫавăн пек ху тăванусене пулăшма кил, пирĕнпе вăрҫакан тăшмансене ҫĕнтер.

## VII.

## ХАРПĂР СВЯТОЙ УШКĂНĔСЕН ТРОПАРĔСЕМПЕ КОНДАКĔСЕМ.

*Ўтсĕр сывлăшсенĕн (ангелсенĕн).*

*Тропаръ, 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей ҫўлти ангел ҫарĕсенĕн пуҫлăхĕсем, епир тивĕҫсĕр ҫынсем йалапах сире тархаслатпăр; пирĕншĕн кĕл-туса хăвăрăн хăватлă, курăнми ҫунатăрсемпе пире



хўтĕлесе тăрăр; пире, тĕрлĕ инкекрен хăтарăр тесе, тăрăшса пуҫҫапса йăлăнакансене сыхласа тăрăр: есир ҫўлти ангелсенĕн аслă пуҫлăхĕсем.

*Кондак, 2-мĕш кĕвĕпе.* Ей Турă ҫарĕ пуҫлăхĕсем, Турă мухтавĕшĕн ĕҫлекенсем, ангелсен хушшинҫе аслисем, етемсене вĕрентекенсем, Турăран пире усăлă, пысăк ырлăх ыйтăр: есир ўтсĕр ангелсенĕн ҫар пуҫлăхĕсем.

*Пророкăн.*

*Тропаръ, 2-мĕш кĕвĕпе.* Ей Турă, Хăвăн (*йатне кала*) пророку йаҫĕпе праҫник туса, Сана: пирĕн ҫунсене ҫăл, тесе тархаслатпăр.

*Кондак, 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей телейлĕ, мухтавлă (*йатне кала*) пророк, сапăн таса ҫĕрў Святой Сывлăшпа ҫутăлса малашне мĕн пулассине пĕлекен пулнă: тахҫан пулассине есĕ халҫхи пек курса тăнă, ҫавăнпа Сана хисеплетпĕр.

*Апостолăн.*

*Тропарь, 3-мĕш кĕвĕпе.* Ей святой (*йатне кала*) апостол, ырă кăмăллă Турра тархасла, Вăл пирĕн ђунсене ҫылăхран каҫаринђĕ.

*Кондак, 4-мĕш кĕвĕпе.* Ей (*йатне кала*) апостол, есĕ Христоса ĕненекен халăха хăватусене нумай кăтартса ҫутăлтарса тăратăн, есĕ вĕсемшĕн йаланах ҫап-ҫутă ҫăлтăр пек пултăн; ҫавăнпа Христоса тархаслатпăр: ей ырă кăмăллă Турă, Хăвăн апостолна ĕненсе асăнакансене ҫăл, тетпĕр.

*Апостолсенĕн.*

*Тропарь, 3-мĕш кĕвĕпе.* Ей святой апостолсем, ырă кăмăллă Турра тархаслăр, Вăл пирĕн ђунсене ҫылăхран каҫаринђĕ.

